# Поэт тата тавра пӗлӳҫӗ.

«Тӑван Атӑл» журналта пичетленнӗ (2018-4, С. 47 – 50)

Ҫӳретӗп ҫӗрӗпе Смоленск таврашӗнче…
Сив ҫил юрпа перет, ура айне чӑмать,
Ҫапах утатӑп эп хир варринче пӗччен.

* * *

Таҫта ҫак ҫӗрсенче аттеҫӗм ҫывӑрать,
Ҫӳретӗп ҫавӑнпа, юра ашатӑп эп.
Йӗри-тавра сӗм каҫ, ҫил-тӑвӑл ахӑрать.
1953



Исаев Александр Павлович

Исаев Александр Павлович (1924 – 1986) Чӑваш Республикин Патӑрьел районӗнче Нӑваш Шӑхаль ялӗнче ҫуралнӑ, ӳснӗ, пурӑннӑ, тӑван ялӗнчех канлӗх тупнӑ.

Александр Павлович тавра пӗлӳҫӗ Аслӑ Аттелӗх вӑрҫинче паттӑрӑн ҫапӑҫнӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн тӑван ялӗнче пӗр вӑхӑт «Восход» колхоза ертсе пынӑ. Каярах шкула ӗҫлеме куҫнӑ. Нумай ҫул хушши физика вӗрентекен учительте, директорта ӗҫленӗ.

Шкулта ӗҫленӗ чухне вӑл тавра пӗлӳ ыйтӑвӗсемпе, пултаруллӑ ҫынсен пурнӑҫӗпе кӑсӑкланнӑ, чылай материал пуҫтарса хӑварнӑ. Ытларах, паллах, вӑрҫӑ ветеранӗсем ҫинчен, вӑрҫӑ хирӗнче ӗмӗрлӗхе куҫне хупнӑ салтаксем ҫинчен тӗрлӗ материал пуҫтарнӑ, нумай организацисемпе ҫыхӑну тытнӑ. Ҫав ҫыхӑнусене пула, ман шутпа, Геннадий Николаевич Лисин (Айхин) ашшӗ - Лисин Николай Андреевич - хӑш ҫапӑҫура вилнине, ӑҫта пытарнине тупса палӑртнӑ. Николай Андреевич[1] Александр Павлович Исаева шкулта вӗрентни ҫыруран паллӑ. Тен ҫавӑнпа пуль учитель ҫул-йӗрне шыраса тупас тесе нумай вӑй хунӑ. Николай Андреевич репрессие лекни те хӑратман тӗпчевҫе.

[1] Николай Андреевич Лисин 1937-мӗш ҫулта Нӑрваш Шахаль шкулӗнче ӗҫленӗ.

Сăмах май каласан, Александр Павлович ашшĕ те Павел Макарович Исаев, тăрăшуллă хресчен пулнăшăн репрессие лекнĕскер, тĕрмерех çĕре кĕнĕ. Ниме пăхмасăр, никамран хăрамасăр, 1955-мĕш çулта тĕрлĕ çĕре  çырусем çырса ашшĕн таса ятне каялла тавăрнă.

Александр Павлович архивĕнче эпĕ Геннадий Николаевич янă икĕ çыру çеç тупрăм. Çыхăну тытас шухăша тавра пĕлӳçĕ хускатнă пулас. 1974-мĕш çулччен поэт А.П. Исаев пирки пĕлмен курăнать. Çакă çыруран паллă. Апла пулин те çак хыпаршăн Геннадий Николаевич питĕ хĕпĕртет, тăван патне çыру çырнă пекех, ăшă сăмахĕсемпе çыру шăрçалать.

1979 çулхи июлĕн 18-мĕшĕ,
Лемболово (Ленинград айккинче)

Хисеплĕ Александр Павлович!


Геннадий Николаевич Айхи çамрăк çулсенче.

Сирĕн умăрта та, аттен ырă ячĕ умĕнче те питĕ айăплă пултăм, халиччен те атте сăнӳкерчĕкĕсемпе унăн çырăвĕсен копийĕсене ярса параймарăм. Çырăвĕсене «Ксерокс» машинипе кописем тутарма чылай чăрмавлă пулчĕ, çавă чылай тытса тăчĕ.
Сăнӳкерчĕксен хамри копийĕсене те нумерлесе


Николай Андреевич Лисин (сулахайĕнче), Осип Васильевич Кириллов(варринче)

хăваратăп: тен, чылай çынсен ячĕсене, датăсене мана пĕлтерме ерĕçейĕр? Ку ячĕпе М.С. Кольцова[2], Именкассинче манăн аттепе пĕрле ĕçленĕскер, питĕ пулăшма пултарать. Вăл халь Кĕçĕн Арапуçĕнче пурăнать. Мария Степановна патне эпĕ тепĕр эрнерен çыратăп (пуштă, кунти дачăллă вырăнтан, эрнере пĕрре каять, паян çырса ĕлкĕреймерĕм), фотокописем те ярса парăп, Сирĕнпе çыхăнма ыйтăп. Дачăна, çемьепе, çак эрнере килтĕмĕр, арăм августра Мускава таврăнмалла; хам

[2] Кириллова /Кольцова/ Мария Степановна /1918 – 1985/, Николай Андреевич Лисинпа /вырăс чĕлхи вĕрентнĕ/ пĕрле Патăрьел районĕн Именкасси шкулĕнче пĕрле ĕçленĕ.  Н.А. Лисин Мария Степановна упăшкипе, Осип Васильевич Кирилловпа, пĕрле 1941–мĕш çулта фронта тухса кайнă.

эпĕ, тен, октябрьчченех кунта пулатăп пулĕ: ĕçлемелли питĕ нумай – Чувашгиз валли хамăн сăвăсен кĕнекине тата Польша поэчĕсен пысăк антологине вĕçлесе-хатĕрлесе çитермелле. Эсир ман пата Мускав адресĕпех çырăр (хуравăра питĕ кĕтетĕп!), – пур корреспонденцие те кунта ман пата вăхăтра çитерсе тăраççĕ.



Николай Андреевич Лисин (поэт ашшĕ) - пуçламăш шкул учителĕ. Иртнĕ ĕмерти 30-мĕш çулсен пуçламăшĕ.

Тĕлĕнмелле этемĕн шăпи! – ку дача – карелсен çĕрĕ пулнă районта; 1940–1941 çулсенче пирĕн çемье Карелире пурăннă, – пирĕн çавăн чухнехи станцине кунтан 2 сехетре çитме пулать. Юнашарах – тахçан аттепе пĕрле пурăннă вырăн. Çав вăхăт чи хаклă тĕлĕк пекех юлтăр тесе, ачалăхăн кунти çĕрне кайса курас мар, терĕм (юнашар сисĕнсе тăни те пăлхантарать).

Сăнӳкерчĕксене пăха-пăха та чылай пăлханатăп: ăçта-ши вĕсем çине хăйсен сăнĕсене хăварнă çынсен ӳчĕсемпе чунĕсем? Пире юратнисем, лăпканисем, ĕмĕтленнисем, пурнăçа юратса пăлханнисем? Вăрçăран таврăнманнисем мĕн чухлĕн пулма кирлĕ... Тинкеретĕн те çав сăнсене, этемĕн пурнăçĕ çĕр çинче иртсе кайнипех вĕçленмест пулĕ, тетĕн; пурнăç пĕлтерĕшĕ вилĕм хыççăн та юлать пулĕ, теесех килет. Унсăр – ăнланма та çук çак сăнӳкерчĕксене, çырусене…



Геннадий Николаевич Айхи.

Кун пек материалсем тата та пур. Кирлĕ пулсан, каярахпа, каллех кописем тума пулать.

Мария Степановнăпа, тен, Эсир те пуштă урлă çыхăнма, е курнăçма май тупайăр?

Манăн йăмăкăн. «Авангардра» пĕлтĕр тухнă очеркĕ пурах-тăр Сирте («Салтак çырăвĕсем[3]»).

Шăхальте атте Вазинге[4] хушаматлă тăлăх çамрăка питĕ юратнă (ăна эпĕ хам та кăштах, тĕлĕкри пек астăватăп). Эсир пĕлнĕ-и, астăватăр-и ăна?

Каçарăр, – васкаса çырма лекрĕ. Сирĕн çырăвăра питĕ кĕтетĕп.

Сире чĕререн тав туса, чун лăпкăлăхĕпе çирĕп сывлăх сунса:

Геннадий Айхи.

P.S. Манăн «Чĕрĕ тĕвĕ» кĕнекене ярса панăччĕ-ши эпĕ Сире? – пĕлтерĕр. «Венгри поэчĕсене» ярса панă пек астăватăп.

*Г.А.*

1974, сентябрĕн 23- мĕшĕ

Мускав

Хаклă Александр Павлович!

Чун-чĕререн пысăк тав Сире мана питех те хумхантарнă çырăвăршăн!

Çĕньялта пулнă чухне Сирĕн çинчен пĕлнĕ пулсан, эпĕ, паллах, Сирĕн патăра çитеттĕмех. Шел, пĕлеймерĕм.

Сирĕн çырăвăр мана епле пăлхантарса, тĕлĕнтерсе яни çинчен каласа пама сăмахăм çитес те çук. Вуланă чух, хам куçăма хам ĕненмерĕм, теме те пулать.

Аттене, уйрăлас умĕн, эпĕ яланлăха юратса юлма, астуса юлма та ĕлкĕрнĕ. Вăл халь те куçăм умĕнчех… Мана хута вĕрентме те, вырăс чĕлхине кăштах ăнкарма та, ăна-кăна, питĕ кирлĕ япаласене ăнлантарса хăварма та ĕлкĕрнĕ вăл. Вăл вилни çинчен хăрушă хыпар çитсен, нихăçан иртми тунсăх пуçланни çинчен, çав тунсăх халĕ те (нихçан та!) иртменни çинчен те – çырас пулсан – вĕçĕ-хĕррисĕр çырмалла. (Çав тунсăх – манăн чылай сăвăсенче те пур, – унччен тухнисенче те, халь пичетленекен, пиллĕкмĕш сăвă кĕнекинче те). Атте çырăвĕсене те пурне те халиччене упратăп («ученику I-го класса Лисину Геннадию» тесе адресленисем те пур!), сăнӳкерчĕкĕсене те...

«Похоронен в г. Демидове Смоленской области», – тесе çырнăччĕ хăрушă извещенире... Халиччен çакна çеç пĕлнĕ эпĕ, урăх – нимĕн те пĕлмен[5].

---

[3] Ева Лисина 1978 çулхи майăн 9, 11-мĕшĕсенче «Салтак çырăвĕсем» ятлă очерк пичетленĕ. Унта вăл ашшĕ, Николай Андреевич, вăрçăран янă çырăвĕсене хайĕн аса илĕвĕсемпе тата комментарийĕсемпе пичетленĕ.

[4] Вазинге Ефим Яковлевич 1919-мĕш çулта çуралнă. Усрава илнĕ тăлăх ача пулнă. Вăрçăччен шкулта учительте ĕçленĕ. 1939–мĕш çулхи ноябрĕн çирĕм улттăмĕшĕнче салтака илсе кайнă. Вăрçăн перремĕш кунĕсенчех Брест крепоçне хӳтĕлесе пуçне хунă. / А.П. Исаев, Ю.Н. Исаев, Л.Ю. Исаев. ВĂРÇĂ. ПАТТĂРЛĂХ. ĔМĔРЛĔХ АСТĂВĂМ Шупашкар.: «Çĕнĕ вăхăт», 2018, 320 с., С. 140./

Халь, акă, атте вилтăприйĕн сăнӳкерчĕкĕ çинчен вулатăп. Тĕлĕнсе, ахлатса ятăмăр йăмăкпа пĕрле. Нивушлĕ? Нивушлĕ аттен вилтăприйĕ çак çĕр çинче пур? Нивушлĕ унăн тăпри умне çитсе чĕркуçленме май пур?.. Пĕтĕм туйăмсене, чун-чĕрен пĕтĕм пăлханăвне пĕлтерме сăмах та çитмест. Кĕскен çеç, пĕтĕм чĕререн ыйтатăп: тархасшăн, пĕлтерĕр-ха мана:

Камсем, мĕнле ырă çынсем, ырă ачасем манăн аттен вилтăприне тупнă? Епле, хăçан? (Çав çынсене, çав ачасене – çĕре çитиччен: таймапуçăм!);

Эпĕ атте тăприне курма каяс пулсан, ун патне еплерех çитмелле-ши, еплерех унăн тăприне тупмалла-ши?;

тата: питех те, питех те, чунтан ыйтатăп: атте вилтăприйĕн сăнӳкерчĕкне, копи туса, ман пата ярса параймăр-и? Питех те, питех те кĕтетĕп!

Атте пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен эпĕ, май килнĕ таран, пултарнă таран, пĕтĕм материалсене пухса пынă. Сирĕншĕн, сирĕн шкулăршăн интереслĕ пулсан, вĕсене те, аттен хăшпĕр сăнӳкерчĕкĕсен копийĕсене те Сирĕн патăра ярса пама пултарăттăм.

Сирĕнпе, ман аттен вĕренекенĕпе, тăванла тĕлпулса калаçасчĕ. Çитес çул тăван яла çитессе шансах тăратăп, – вара – курнăçăттăмăрах! Мускава килес пулсан, ман пата çитеймĕр-и, – чĕререн кĕтнĕ хăна пулăттăрччĕ пирĕн кил-йышшăн!

Сирĕн хуравăра питех те, хумханса кĕтĕп! Чĕререн тав туса, ырлăх-сывлăх сунса:

Геннадий Айхи.

119361 Москва, ул. Озерная, 38 кв. 4 Айги Г.Н.

---

[5] Лисин Николай Андреевич (1904 – 1943), коммунистсен партине кĕмен отделени командирĕ, кĕçĕн сержант, Смоленск облаçĕнчи Демидово хулин анăç енче 1943-мĕш çулхи сентябрьĕн çирĕм иккĕмĕшĕнче çапăçура пуçне хунă. Демидов хулан иккĕмĕш масарĕнче пытарнă. (МЕМОРИАЛ электронлă ресурс, тата Чăваш кĕнеке издательсти кăларнă «Память» 1995).

Геннадий Николаевич Айхи панă тĕрлĕ интервьюсенче ашшĕ çинчен тĕлĕнсе каймалла ăшă сăмахсемпе аса илет. Николай Андреевич учитель пулнă. 1934-мĕш çулта, пĕр çулталăка яхăн айăпсăр Улатăр хула тăрăхĕнче тĕрмере (лагерь) ларнă. Сăвăсем çырнă, вырăссен литература классикĕсен хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Хăш-пĕр сăввисене тĕрлĕ литература альманахĕсенче пичетленĕ. Митта Ваçлейĕпе тус-юлташлă пулнă. Мĕн пĕчĕкренех ывăлне тĕрлĕ çырма хăнăхтарнă: «Ывăлăм, эсĕ, эпĕ пĕлетĕп, çыракан çын пулатăн. Эсĕ суйласа илекен тĕрĕслĕхе шыракан çул – йывăр çул. Çыракан çын çулĕпе пыма нумай пĕлмелле, культура шайĕ çӳлте пулмалла» – тенĕ. (Геннадий Айги: Разговор на расстоянии: Статьи, эссе, беседы, стихи. – Спб.: Лимбус Пресс, 2001. – 304с.; журнал Свободная мысль 1997 №7 «В России я обязан быть и переживать ее судьбу…»).



Николай Андреевич Лисин ывӑлӗпе. 1938-мӗш ҫул.

1953 ҫулхи дневникран

Ман аттерен мана – ун ячӗ юлнӑ.

Эп хам ӳтре туятӑп ун юнне… 1953